К84.89(=Чув)
В55
Ч-42023

Клавдия Вишневская

# ХЁЛ МУЧИПЕ ЮР ПИКЕ

*Сăвăллă юмах*



К 84.89 (=Чув
В55

Клавдия Вишневская

# Хӗл Мучипе Юр Пике



Шупашкар
2004

ББК 84(2 Рос. Чув) - 6
В 555

ПРОВЕРЕНО
20 10 11 ОКТ 2017

ч-42023
НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

**К. И. Вишневская. Хĕл Мучипе Юр Пике.** Сăвăллă юмах. - Шупашкар, 2004.

© К. И. Вишневская.

# ХЁЛ МУЧИПЕ
# ЮР ПИКЕ

## 1

Ҫӳллӗ сӑртӑн хыҫӗнче,
Ҫичӗ ҫырма хӳттинче.

Симӗс чӑрӑш юр юрлать,
Ун кӗввипе юр ташлать.

Шур пир тӗслӗ юр пике –
Хитреленнӗ кӗлетке.

Пиллӗкне авса пӑхать,
Чӑрӑш ҫумӗнче ташлать.

Чӑрӑшпа Пикен юрри –
Ҫӗнӗ ҫулшӑн туйрӑр-и?

Камваскатнӑ вӗсене
Елка репетицине.

Репетици вĕçленсен,
Хырĕсем хĕпĕртесе

Алă çупрĕç савăнса,
Çилĕ тухрĕ çаврăнса.





НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

2

Йывăçсем хурланнă пек:
– Пултăрччĕ хăть шур кĕпе, –

Харăс пăхрĕç хурăна –
Хĕл Мучи туять çакна.

Хĕл Мучийĕ васкаса,
Çӳллĕ тусемпе утса

Йывăçсене тĕрĕслет:
– Тумлантарăп, – текелет.

Шур сухал канмасăрах
Тĕр тĕрлерĕ хыпăнсах.

Çĕнĕ Çул парниййĕсем –
Хĕл Мучин илемĕсем.

Пушă хура уйсене,
Хырлăх, ăвăслăхсене

Тумлантарса пĕтерсен
Кайрĕ çулне йĕрлесе

Çӳллĕ сăртăн хыçнелле
Чăрăш, Пике еннелле

Ыр ĕçсемшĕн тав тума,
Чысласа тумлантарма.

Хĕлĕн пуянлăхĕпе –
Кĕмĕл тĕслĕ мерченпе

Тумлантарчĕ пикине,
Ăсталанă юр – хĕрне.

Çутă-çутă кuçĕсем,
Шап-шур ĕçчен алăсем,
Ташламашкăн урисем.

Ахах-мерчен тĕсĕпе
Йăлтăртатрĕ тумĕпе.



Хӗл Мучи хӑй ватӑлса
Кайнӑ-ҫке йӑлтах шурса.

Ҫавӑнпах пуль хӑй хӗрне
Пачӗ пӗтӗм пурлӑхне.

Шур кӗлетке – Юр пике
Ӑнланмасӑр: – Хаклӑскер! –

Хӑй хупларӗ ҫеҫ куҫне,
Хӗм ҫутатрӗ ун питне.

Йӑлтӑр-ялтӑр хӗм сапать,
Вуник тӗслӗн ҫуталать.

3

Чӑрӑш та халь ҫутатать –
Вуник арча уҫӑлать.

Ак вуниккӗмӗш арчи –
Чи чапли ку – Мучин.



Ыттисем шăллĕсенчен –
Начар мар пек Мучирен.

Пурлăх пур кашни арчин.
Юр Пике пăхать халь тин.

Раштавпа Кăрлачăн ав
Тĕлĕнмеллĕх пур ăна.

Пушă уйăхăн вара –
Виççĕмĕш сар арчара

Çап-çут куçлă кӳлĕсем,
Чупкалаççĕ чĕр чунсем.



Ака уйăхĕн арчи
Туп-тулли. Пур тыр пĕрчи.

Пĕлеймерĕ кирлине –
Ăнланмасть çăкăр мĕнне.

Çу уйăхĕн хĕвелне,
Çĕртме уйăхăн мулне

Пăхрĕ, пăхрĕ пур енчен:
– Ыйтăп, – терĕ çынсенчен.

Утă уйăхĕн вара
Килĕшӳллĕ арчара –

Çут çанталăк тĕсĕсем –
Çĕрĕн чаплă тумĕсем.

Тепĕр арчи çурла пек –
Çĕр пуянлăхĕсемпе.



Авăн уйăхăн арчи...
Мĕн тултарнă-ши вăл, чим.

Уçнăçемĕн сарăлать,
Ылттăн-хĕмлĕн сапăнать.

Тырă-пулă мул парать,
Унăн ăшши варкăшать.

Мулĕ темĕн чуль пулас,
Кам пуçтарнă вăл мула?

Çĕр çинче ĕçлекенсем,
Тăрăшнă, чăнах, вĕсем.

Юпа пухнă кĕр мулне
Халь параççĕ çынсене.



Йăтăнас пекех арчи,
Тăпăлас пек çăраççи.

Акă вунпĕрмĕш арчи –
Пухнă чÿк уйăх каччи.

Вăл вуниккĕмĕш пекех,
Тĕспе çеç тĕссĕртерех.

Ку вуниккĕмĕш арча,
Пулăшĕ илме ача.

Шăллĕсен те чухăн мар,
Ĕçсĕр уссăр пурăнман.



4

Хӗл Мучи халь васкасах
Пачӗ йӑлт ӑнлантарса:

Ҫӗрпе Уйӑх ачине
Илме вӑхӑт ҫитнине.

Вашаватлӑ Хӗл Мучин
Йӑлтӑртатрӗ чӳречи.

Килчӗҫ унӑн шӑллӗсем,
Ҫитрӗҫ хаклӑ кӳршисем.



Шăнкăравлă пĕккисем.
Йăлкăшаççĕ хăюсем.

Улăп евĕр ямшăксем,
Виç лашаллă çунисем.

Хĕл Мучи хăнасене
Лартрĕ сĕтел хушшине:

– Пысăк ĕçĕмсем умра,
Юлас марччĕ парăмра.



ч-42023
НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

Вĕçсĕр вăхăт шунăран,
Ĕçлесе тарланăран

Вată пурте – пурпĕрех
Чĕрĕ, сывă еплерех!

Хисеплеççĕ аслине,
Халь кĕтеççĕ мăнукне.

Уйрăм пухнă мулсене
Хатĕр пама Çĕн Çулне.



5

Çичçĕр çитмĕл çырмаран,
Сăртлă –туллă шырланран

Юр Пике чупса каçсан
Илтрĕ сасă ăнсăртран.

Пычĕ Юр Пике унта,
Çĕр сассийĕ: – Кам унта?!

Уйăх курчĕ Пикене,
Вăл кăтартрĕ ачине.

Пĕр ача çулталăкран
Çĕр парать çуралнăран.

Уйăхпа Çĕр ачине
Илчĕ Пике аллине.

Пур уйăхсен укçине
Пачĕ тата ылтăнне.

Пурлăх укçине курсан
Уйăхпа Çĕр тав туса

Пачĕç çӳрен лашине,
Йăс тупанлă çунине.

Çĕнĕ Уйăх савăнсах
Пачĕ çулне çутатса.

– Ӳстĕр, – терĕ ачине
Туйнăн пурнăç ăннине.

Ачана ачашласа
Юр Пике пырать пăхса:

Тĕлĕнтермĕш! ак Çĕнçул
Ӳсрĕ хăвăрт темĕн чул.

Çак Çĕнçул тек ыйткалать,
Ăнланмашкăн тăрăшать.Ăсĕ-тăнĕ...





Ăсĕ-тăнĕ чăнласах
Хушăнать самантрах

Ик çунатлă кайăк пек
Лашасем урисемпе.

Çитрĕç Хĕл Мучин килне,
Тайрĕç ыррăн пуçсене.

Чаплă хыçлă çунаран
Çĕнĕ Çул хăй аннăран

Хĕл Мучийĕ савăнать,
Çупăрласа ыталать.

Сивĕ пĕлĕт хĕрелсе
Пăхрĕ темшĕн тĕлĕнсе.

Кайрĕ хăвăрт сăнама,
Хĕпĕртесе юр тăкма.

Каш!!! кашларĕ сĕм вăрман
Чĕр чунсене вăратма.

Чĕвĕлтетрĕç кĕслепе
Çĕнĕ Çул хыпарĕпе.

Ешĕл симĕс йĕплисем,
Çӳллĕ çамрăк чăрăшсем

Хĕл Мучие итлесе
Утрĕç харăс йĕрлесе.

Ăшшăн юрă юрласа,
Вашаватлăн ал парса

Çĕнĕ Çула Кивĕ Çул
Тĕпелелле пачĕ çул.



НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

Клавдия Ивановна Вишневская

**Хӗл Мучипе Юр Пике**
**Дед мороз и снегурочка**

*Для младшего школьного возраста*

*Сказка в стихах*
*на чувашском языке*

Художник *С. В. Павлова*
Компьютерная верстка *А. Ж. Арамян*

Подписано в печать 10.12.04 г.
Бумага офсетная. Гарнитура ArialCyr. Печать офсетная.
Тираж 500 экз. Заказ 1550.

Отпечатано в типографии.